26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
7
ЮНКУН
138(6375) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Чăваш халăхě хăйěн фронтри ывăлěсем патне янă ÇЫРУ

Пирěн мухтавлă ывăлăмăрсем!

Хěрлě Çарăн хастар воинěсем, Улăп-паттăрăн тивěçлě йăхěсем, халăх ирěклěхěшěн кěрешнě Атăл пăлхавçисен вěри юнлă ăравěсем, ылханлă тăшмана хирěç кěреш-юмансем пек çирěп тăрса пире хӳтěлекен паттăрсем,—

Сире чăваш халăхě пěтěм чěререн хěрӳллě салам ярать!

Пирěн таса Тăван çěршыв çине ултавлăн килсе тапăннă нимěç тискер кайăкěсене пуçěпех çапса аркатма, совет çěрěн аслă талккишěсене тěпěйěрěпех тасатса çитерме сире, пирěн паттăр ывăлăмăрсем, ырă сывлăх сунатпăр. Хамăрăн тăван çěр, сирěн чěресене хăйěн хăватлă сěткенне парса, иксěлми вăй кěрттěр! Сире çапăçу хирěнче паттăр та чаплă ěçсем тума пехиллетпěр! Пирěн асаттесен хěçě нихăçан та тутăхман, эпир нихăçан та тăшмана пăхăнман. Хăюллă та хастар пулăр, пирěн паттăрсем!

Сире аслă Атăл хăйěн хумěсем çинче чăпăл туса çитěнтерне. Тăван совет çěршывě сире хаяр ăмăрткайăк пек вěçме сарлака та хăватлă çунатсем панă, ирсěр тăшмана таптама—танксем, фашистла тискер кайăксене вěлерсе пěтерме—шанчăклă хěçпăшал панă. Пуринчен пахараххи—çапăçура нимěнрен хăрама пěлмен чěресем панă. Çапăçу хирěнче арăслан пек пулăр! Чыслă тытăр асаттесемпе аттесен ятне, чěрере усрăр халăх тивěçне!

Чăваш çěршывě мěн авалтанпах пирěн аслă Российăн вăтаçăрěпче тăрать.

Эпир Российăна яланах хамăрăн тăван çěршыв тесе шутланă. Аслă вырăс халăхě хӳтěлемен пулсан, пирěн пек сахал йышлă халăхсене ют çěртен килнě тăшмансем тахçанах туртса çурса, çисе яма пултарнă. Çавăнпа Россия çěршывě умне килсе тухнă хăрушлăх яланах пирěншěн те хăрушлăх пулнă. Çавăнпа вырăс çěрě çине тăшман тапăнсан, вырăс халăхěпе пěрле пирěн чăваш халăхě те пěрлехи тăшмана хирěç яланах кěрешěве çěкленнě.

Вунçиччěмěш ěмěрěн пуçламăшěнче Мускава ютçěршыв çарěсем тапăнса кěрсен, пирěн халăх Кузьма Минин чěннипе Чулхула ополченине хутшăннă, çар валли тир-сăран, çăм, пир-авăр, тырпул, аш-какай парса тăнă. Çак пархатарлă ěçсем историн аслă кěнеки çине яланлăхах ылттăн саспаллисемпе çырăнса юлнă.

Аслă Петěр патша саманинче чăвашсем, ытти халăхсемпе пěрле, Питěр хулин—хальхи Ленин хулин никěсне хывнă çěрте тар юхтарса ěçленě. Йывăр та пулнă пулě, анчах çав крепость пирěн тăван çěршывăн ěмěрлěхех чи çирěп те кирлě крепоçě пулса юлчě. Питěр хулин никěсне хывакансен ывăлěсен ывăлěсем паян Ленин хулине фашистла вăрă-хурахсенчен хастаррăн хӳтěлеççě.

Пирěн çěршывăн летописçне чăваш халăхě 1812 çулти отечественнăй вăрçа хутшăнни тивěçлипе кěрсе юлнă. Чăвашсем çар валли укçа-тенкě тата апат-çимěç пухнă, хăйсен ывăлěсене Наполеона хирěç вăрçа ăсатнă. Чăваш воинěсем—Чикме уесěнчи Урпаш околодокне кěрекен Тяпти ялěнчи унтер-офицер Василий Григорьев, Етěрне уесěнчи Кушар околодокне кěрекен Кěçěн Юнтапа ялěнчи унтер-офицер Сидор Семенов тата ыттисем те çав халăх вăрçинче хăйсен паттăрлăхěпе палăрса юлнă.

1914—1918 çулсенчи тěнче вăрçинче чăваш ывăлěсем, ытти халăхсен ывăлěсемпе пěрле, вырăс халăхě ертсе пынипе, нимěçсене хирěç вăрçнă. Брусилов хăйěн çарěпе тăшманăн оборонине татса кěнě чухне чăвашсем арăслансем пек çапăçнă. Чăваш салтакěсем командирсен приказěсене яланах тӳрě кăмăлпа, вěçне çитичченех пурнăçа кěртнипе палăрса тăнă.

Чăваш халăхě тăван çěршыва хӳтěленě çěрте хăйěн паттăрлăхěпе хастарлăхне иртнě вăрăм кунçулта сахал мар кăтартса панă. Темěнле йывăр килсен те, темěнле хěнхур тӳссен те вăл хăйěн сăн-сăпатне, хăйěн шанчăкне, хăйěн паттăрлăхне, хăйěн чěлхине, сăвви-юррисене çухатман. Вăл хăйěн тивлечěпе тивěçлěхне ěмěрсем витěр паянхи çутă саманана илсе çитерне.

Этемме этем пусмăрланине хирěç, патша тытăмěпе тиранине хирěç, харам-пырсене хирěç, хăйěн ирěклěхěпе чыслăхěшěн, никама пăхăнманлăхěшěн пирěн халăх асран кайми 1917 çулта вырăс халăхěпе пěрле пěр çын пек пулса кěрешěве çěкленнě. Пихтемейпе Аттенейăн—Степан Разинпа Емельян Пугачевăн мухтавлă дружинникěсен тивěçлě йăхěсем, вырăс рабочийěсем ертсе пынипе, 1917 çулти Октябрьте патшан Хěллехи дворецне штурмланă, граждан вăрçин уйхирěсенче ютçěршыв интервенчěсене хирěç паттăррăн çапăçнă. Чăваш çěрě çинче, Шупашкар çывăхěнчи Будайка ялěнче çуралнă, Шупашкартан империализм вăрçине кайнă Василий Иванович Чапаев пирěн аслă çěршывăн аслă историне граждан вăрçин чаплă геройě, хастар та аслă полководец пулса кěрсе юлчě. Халě, отечественнăй аслă вăрçă кунěсенче, Чапаевăн çулăмлă ячě пирěн боецсене хаяр çапăçура хавхалантарса, вăй парса пырать. Пěр чаçри чăваш боецěсем чăваш халăхě патне янă çырура: „Эпир тăшмана хирěç хамăрăн паттăр земляк пек—Чапаев пек çапăçăпăр“, тесе çырчěç. Граждан вăрçинче çуралнă геройсен—чăваш ывăлěсен ячěсем паянхи юрăсемпе сăвăсенче янăраççě, вěсем Хěрлě Çарăн боецěсемпе командирěсене халăх ěçěшěн паттăррăн та хастаррăн, хăюллăн кěрешме чěнеççě.

Эсир те, пирěн тăван ывăлăмăрсем, аслă асаттесен тата асаттесемпе пиччесен чапне çěре ан ӳкерěр! Çапăçура дисциплинăллă та ăслă, хастар та паттăр пулăр!

Тăван çěршывшăн, çутă та телейлě пурнăçшăн, этем тивěçлěхěпе тивлечěшěн халăх нумай юн тăкса кěрешни ахаль çухалмарě. Халăхăн çав вěри юнěпе нумай ěмěрсем хушши шăваранна аслă çěршывра социализмăн чечеклě сачě ӳссе çитěнчě. Октябрьти социализмлă революципе çуралнă чăваш халăхě те çирěп ура çине тăчě.

Большевиксен партийě, аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин ертсе пынипе, вырăс халăхě тăванла пулăшса тăнипе, пирěн чăваш халăхě хăйěн советлă социализмлă государствине туса çитěнтерчě.

Сталинла аслă пятилеткăсем тăван республикăн сăн-сăпатне пěтěмпех çěнетрěç. Çил шăхăрса çӳренě пушхирсенче халě çěнě фабрикăсемпе заводсем ӳссе ларчěç. Колхозсем ěçлесе çěнетнě тăван çěр пуян тырпул пама тытăнчě. Тутăхса кайнă чалăш сухапуç вырăнне хăватлă тракторсем ěçлеççě. Ěлěкхи тěттěм самана витěр хěвел çути ӳкмен чăваш ялěнче халě шкулсемпе клубсем, культурăн çěнě вучахěсем, больницăсем çитěнчěç. Патша саманинчен юлнă инкек—трахома пуçěпех пěтсе пырать, партипе правительство пулăшнипе пиншер чăваш ěççыннисем трахомăран сывалчěç, çěнě кун çутине курчěç.

Совет влаçěн çулěсенче чăваш халăхěн хăйěн рабочи класě ӳссе çитěнчě. Ěлěк чăпта станокěнчен ытла нимěнех те курман чăваш ěççыннисем, чăваш хěр-упраçěсем халě пысăк фабрикăсемпе заводсенче кăткăс станоксемпе ěçлеме тытăнчěç. Ěлěк-авал тěттěмлěхпе тěшмěшлěх тыткăнěнче пулнă чăваш хěрарăмěсем, Совет влаçě панă аслă правăсемпе усă курса, государствăна тытса пырас ěçе хутшăнчěç.

Чăваш халăхěн хăйěн аслă шкулěсем, хăйěн театрěсем, хăйěн литературипе искусстви, музыки, живопиçě пур. Унăн хăйěн инженерěсемпе техникěсем, ученăйěсемпе врачěсем, учителěсемпе агрономěсем, писателěсем, композиторěсем, артисчěсемпе художникěсем—хăйěн интеллигенцийě пур.

Чăвашсен тěп хули—Шупашкар—ěлěкхи купецсен хулинчен, мунчалапа чăпта склачěсен хулинчен совет влаçěн çулěсенче республикăн политикăпа администраци, промышленноçпа культура центрě пулса тăчě.

Кăçал 23 çул тултарнă пирěн автономлă республикăн кăкăрě çинче Ленин орденě çуталса тăрать. Отечественнăй вăрçă кунěсенче те пирěн республика Ленин орденěн чысне çӳлте тытса пырать.

Чăваш халăхěн фронтри паттăр ывăлěсемпе хěрěсем! Сирěн çак вăрçăра ылханлă тăшманран хӳтěлемелли нумай. Çěршывăн çав пуянлăхěсене халăх хăйěн вăйěпе тунă. Кашни пусăм çěре халăх юн тăкса çěнтерсе илнě, тар юхтарса çемçетнě. Кашни çуртăн, кашни завод корпусěн кашни кирпěчне пирěн ăста алăпа туса хывнă. Пирěншěн кашни садпахчинчи кашни чěрě турат, хула урамěсенчи кашни чул чун пек хаклă та чěре пек çывăх.

„Тăван çěршыв сывă пулсан, тăван йăву пулě сан“,—тет пирěн халăх. Çак сăмахсене пурнăç çуратнă. Тăван çěршывшăн хăрушă кунсем килсе çитсен, ěмěрхи традицисене тытса пырса, пирěн халăх вырăс халăхěпе пěрле яланах тăшмана хирěç çěкленнě. Вырăс халăхěпе чăваш халăхěн туслăхě юнпа çыхăнса çирěпленнě. Вăл туслăха нихăçан та, нимěнле тăшман та çěмěрес çук!

Халě те, юнěçен нимěç захватчикěсене хирěç вилěмле кěрешӳ пыракан кунсенче, пирěн çулпуçăмăр, пирěн юратнă аслă аттемěр Сталин юлташ чěннипе, пирěн халăхăн чи лайăх ывăлěсем, пěр çын пек пулса, хамăрăн пурнăça, хамăрăн пуянлăхсене, хамăрăн чыслăхпа никама пăхăнманлăха хӳтěлеме çěкленчěç.

Хамăр ывăлсене вăрçă хирне, хамăр çěрěн таса чиккисене сыхлама ăсатнă чухне эпир:—Чăваш вăрманěсенчи юман-кěрешсем пек çирěп пулăр!—тесе пехиллетпěр.

Чăваш халăхěн ывăлěсемпе хěрěсем хамăр халăхăн ячěпе чыслăхне, историллě традицийěсене çӳлте тытаççě. „Пуçна çухатсан та чысна ан çухат!“ тесе, вěсем аслă вырăс халăхěн тата пирěн тăван çěршыври ытти халăхсен ывăлěсемпе пěрле алла-аллăн тăрса, нимěç вăрă-хурахěсене хирěç çапăçăва кěреççě.

Нимěç захватчикěсене хирěç пыракан кěрешӳ фронтěнче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви чăваш халăхěн ывăлěсемпе хěрěсене 1900 çынна ытла Совет Союзěн орденěсемпе медалěсем парса наградăланă. Паттăррисенчен те паттăррисем Совет Союз Геройěн ятне илме тивěçлě пулчěç.

„Эпě вилěмрен хăрамастăп, вилěм манран хăрать“, тет Совет Союзěн Геройě Федот Никитич Орлов. Вăл юмахри ăмăрткайăк пек тăшманăн пуçě çине çиçěмле тăрăнать. Вăл—ěмěрлěхе асра юлнă Гастелло геройăн ученикě. Капитан Орлов пěтěмпе 144 хутчен çěрлехи боевой вěçевре пулнă. Хăйěн экипажěпе пěрле Орлов юлташ тăшманăн 93 самолетне, 60 ытла танкне, горючи цистернисем, танксемпе боеприпассем турттарса пыракан вуншăр эшелона пěтерсе тăкнă. Пěр пин ытла гитлеровеца леш тěнчене ăсатнă.

> Хăюллă капитан Орлов
> Сăм-тěттěмре вěçет,
> Мěлки ун шелсěр çиçěм пек
> Çěр тăрăх вирхěнет,—

тесе çырать чăваш халăхěн ывăлě çинчен вырăс поэчě.

„Ан тěлěнтер чěлхӳпе, ěнентер ěçӳпе“,—тет пирěн халăх. Гварди майорě Мирон Ефимович Ефимов нимěçсенне 17 самолет, 19 танк, 500 автомашина, фашистсен 3000 ытла салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Геройăн кăкăрě çинче Ылттăн Çăлтăр медалěпе виçě орден ялкăшса тăраççě.

Подполковник Борис Михайлович Васильев, хăюллă та паттăр вěçевçě-истребитель, çапăçури юлташěсене хăйěн вěçě-хěррисěр хастарлăхěпе тăшмана хирěç кěрешме хавхалантарса пырать. Вăл службăра тăракан часть пěтěмпе 375 хутчен çапăçура пулнă. Вăл хăй тăшман аэродромě çине пěрре тапăнсах нимěçсен 7 самолетне пěтерсе тăкнă. Вăл Совет Союз Геройěн ятне илме тивěçлě пулчě, отечественнăй вăрçăн малтанхи кунěсенчен пуçласах тăшмана хирěç çапăçать.

„Артиллери — вăрçă турри“, тенě пирěн аслă полководец Сталин юлташ. Çак сăмахсене Совет Союзěн Геройě майор Павел Васильевич Лаптев хăйěн кулленхи паттăрла ěçěнче тӳрре кăларать. Лаптев юлташ, хăйěн дивизионěпе тăшманăн оборонине татса кěнě çěре хутшăнса, 1500 ытла нимěçе, тăшманăн 13 туппине, 33 минометне, 90 пулеметне пěтерсе тăкнă, 5 склада çунтарса янă. Вырăс артиллерисчěсен авалхи традицийěсене çирěп тытса пыракан чăваш халăх ывăлěн кăкăрне виçě орден тата Ылттăн Çăлтăр медалě илемлетсе тăраççě.

Чăваш республикинчи Комсомольски районри Тукай ялěнче çуралса ӳснě пирěн землякăн — тутар халăх ывăлěн Геннадий Габайдулин минометчикăн паттăр ěçěсем çинчен пěтěм Совет Союзě пěлет. Вăл геройпа пирěн чăваш халăхě тутар халăхěпе пěрлех мухтанать. Çав паттăрла ěçсем тěрлě халăхсен Хěрлě Çарти туслăхне палăртса тăраççě.

Сире, хаклă ывăлăмăрсем, çав туслăха куллен кун татах та ытларах çирěплетсе пыма ырă сунатпăр.

Тăван çěршывшăн Хасан кӳлли патěнче çапăçса Совет Союз Геройěн ятне илнě пирěн земляк — подполковник Вячеслав Петрович Винокуров, белофинсене хирěç вăрçнă чухнехи суранěсем тӳрленсе çитменнине пăхмасăрах, нимěç оккупанчěсемпе вăрçма тухса кайрě. Вăл совет танкěсен хăватлă колоннин пуçне тăрса, вěсене фашистсен кěтěвěсене хирěç çапăçăва ертсе кайрě.

Чăваш ывăлě, çирěм икě çулхи старши лейтенант Иван Смирнов аслă Ленин хулишěн чăннипех те арăслан пек çапăçнă. Нимěç танкěсен темиçе атакине сирсе янă хыççăн пулемет расчечěсем стройран тухсан, вăл, вилěмрен хăрамасăр çапăçса, фашистсен хěссе пыракан автоматчикěсене хирěç нумай вăхăт хушши пěччен кěрешнě. Вăл, тěлěнмелле паттăр, хăйěн вěри чěри тапма пăрахичченех тăван çěре хӳтěленě. Вăл тăшман танкěн урапи айěнче пěтнě, анчах тăван çěр çинчен пěр утăм та каялла чакман. Ленинград фронтěнчи боецсем чăваш паттăрě çинчен юрă хывнă:

> Çěршывăмăр, эсě анне пек ӳстертěн
> Герой — паттăрсенěн ретне.
> Манмастпăр эпир нихăçан, ěмěрне те
> Смирнов пулеметчик ятне.

Çак юрă совет боецěсене паттăрла çěнě ěçсем тума хавхалантарать.

Чăваш халăх ывăлěн — чаплă снайпер Родион Давыдовăн çивěч куçě пěр фашиста та вěçертмест. 165 кун хушшинче вăл снайпер винтовкипе персе 335 нимěçе вěлерне. Нимěçсем пěр участокра наступлени тунă чухне вăл 3 кун хушшинче кăна 105 гитлеровеца леш тěнчене ăсатнă.

Пирěн халăхăн паттăр ывăлěсемпе пěрле фронтра тăшмана хирěç чăваш хěрěсем те хăйсен пурнăçěсене хěрхенмесěр кěрешеççě. Вăрçăн малтанхи кунěсенчех хăйěн ирěкěпе фронта тухса кайнă хăюллă медработник — старши военфельдшер Федора Гайкина Ленин орденěпе Хěрлě Çăлтăр орденне илме тивěçлě пулчě.

Пирěн ывăлсен, Хěрлě Çар воинěсен — ефрейтор-связист Иван Банбуринăн, политрук Андрей Гавриловăн, капитан Илья Павловăн, снайпер Захар Вастиковăн, капитан-артиллерист Федор Семеновăн, пулеметчик Виталий Уруковăн, капитан-артиллерист Ф. Шатровăн, сапер Ф. Волковăн, старшина Т. Павловăн, старши лейтенант В. Немцовăн, старши политрук К. Кузнецовăн тата ытти çěршер паттăрсен чаплă ěçěсем орденлă тăван республикăн чысěпе чапне çӳле çěклеççě.

Тăван ывăлăмăрсем! Эпир сирěн паттăрлăхăрпа, хăюлăхăрпа мухтанатпăр. Сирěн паттăр ěçсем çинчен пирěн халăх юрăсем хывать. Анчах сирěн татах та нумай ěç тумаллине эпир пěлетпěр. Пирěн халăхăн кашни ывăлě герой пулма тивěçлě, унăн тискер тăшмана пěр шеллемесěр вěлерме пěлмелле. Верховный Главнокомандующин, Совет Союз Маршалěн Сталин юлташăн çак сăмахěсене яланах асра тытăр: «Чи кирли халě çакăнта пулса тăрать: пирěн пěтěм Хěрлě Çарăн хăйěн çапăçури ăсталăхне кунран-кун лайăхлатса пымалла, Хěрлě Çарăн мěнпур командирěсемпе боецěсен вăрçă опытне вěренмелле, çěнтерӳ ěçě ыйтнă пек çапăçма вěренмелле».

Пирěн тăван ывăлăмăрсемпе хěрěмěрсем, хăвăрăн ěçěрсен мастерěсем пулăр, геройсем пулăр! Совет воинěн чысне çӳлте тытса пырăр. Хамăрăн тăван çěршывшăн, унăн чыслăхěпе никама пăхăнманлăхěшěн, пире Сталинла Конституци панă аслă правăсемшěн, тăшмана хирěç хăюллăн та пěлсе çапăçăр, чаплă совет хěçпăшалěн çěнтерěвěсене ӳстерсе пырăр!

Эпир, — сирěн аçăрсемпе аннěрсем, пиччěрсемпе шăллăрсем, арăмăрсемпе ачăрсем, кунта, тылра, колхоз уйхирěсенче, фабрикăсемпе заводсенче, хамăрăн хаклă çулпуçăмăр Сталин юлташ чěннине пурнăçа кěртсе пырса, фронтра тăшмана çěнтерме мěн кирлине пурне те туса парассишěн хамăрăн вăйăмăрсене хěрхенмесěр, ывăнма пěлмесěр, çěрне-кунне пăхса тăмасăр ěçлетпěр.

Аслă Атăл Каспи тинěснелле епле хăватлăн тапса тăрать, пирěн халăх та фронтпа çěршыва çавăн пекех тырпул, аш-какай, сěт-çу, промышленноçа — чěртавар татти-сыпписěр парса тăрать. Атăл шывě ěмěрне те типес çук, пирěн халăхăн вăй-хăвачě нихăçан та иксěлес çук!

Иртнě çулта пирěн республикăри колхозсем, Сталин юлташ майăн 1-мěшěнчи приказра чěннипе, Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчěç, тырпул тухăçлăхне ӳстерес тата выльăх-чěрлěх ěрчетессине вăйлатас ěçре пысăк çитěнӳсем турěç. Республика ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вěçлерě, государствăна ялхуçалăх çимěçěсем памалли плана вăхăтра тултарчě.

Пирěн республика ялхуçалăхěнче облаçсемпе крайсем тата республикăсем хушшинче пыракан Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура выльăх-чěрлěх ěрчетес енěпе тунă çитěнӳсемшěн Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне тата Пěтěм Союзри иккěмěш премие илме тивěçлě пулчě. Мěнпур колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем, ялхуçалăх специалисчěсем хăйсен вăйěсене хěрхенмесěр, çине тăрса ěçлесе илнě çав пысăк награда республикăри ěççыннисене Тăван çěршыв чапěшěн çěнě çěнтерӳсем тума кěрешěве хавхалантарчě. Республикăри колхозсемпе МТС-сем çуракине хастарлăн та йěркеллěн тата пěлтěрхинчен 12 кун маларах туса ирттерчěç, çураки планне ытлашшипех тултарчěç, оборона фончě валли ултă пин çурă гектар ытла акса хăварчěç. Колхозсемпе МТС-сенче тырпулсене пухса кěртме хатěрленес ěç хěрӳллěн пырать.

Пирěн фабрикăсемпе заводсенче рабочисемпе работницăсем, кăткăс станоксемпе ěçлесе, фронт валли ывăнма пěлмесěр хаяр хěçпăшал туптаççě. Вăрçă кунěсенче республикăри промышленность чылай ӳсрě, промышленноçра çěнě отраслěсем çуралчěç. Вăрçă пыракан районсенчен куçса килнě фабрикăсемпе заводсене эпир вăхăтра вырнаçтарса лартса ěçе ятăмăр. Хěрлě Çар валли продукци туса кăларасси кунран-кун ӳссе пырать. Чăваш республикинчи нумай предприятисем Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса, Оборонăн Государственный Комитечěн, ВЦСПС-па наркоматсен куçса çӳрекен Хěрлě ялавěсене пěрре кăна мар илчěç.

Пирěн республика хăйěн нумай ывăлěсене фронта ăсатрě. Вěсен вырăнěнче ěçлеме хěрарăмсемпе хěрсем, пирěн çамрăксем тăчěç. Вěсем хăйсене хушнă ěçе лайăх туса пыраççě. Вěсенчен нумайěшěсем правительствăн пысăк наградисене илме тивěçлě пулчěç.

Юлашки 2-мěш страницăра.

Тырпулсене пухса кěртме хатěрленнине тěрěслетпěр

Пысăк çитменлěхсем палăраççě

ВĂРНАР, июлěн 3-мěшě. (Хамăр корр). Районри пур колхозсенче те халě колхозсем тырпулсене пухса кěртес ěçе мěнле хатěрленнине пăхса тухаççě. Комиссисем ěçе тěплěн тěрěслеççě, çитменлěхсене палăртса, вěсене хăвăрт пěтермелли майсене кăтартса параççě.

Яххакассинчи „Пионер“ колхозра тěрěслӳ ěнер пулса иртрě. Тěрěслӳ комиссийěнче МТС директорě Осипов, райçěрěç пайěн заведующийě Максимов, Упнер ялсовет исполкомěн председателě Андреева, агроном Илюпкина юлташсем тата колхоз председателě Архипов юлташпа бригадирсем пулчěç.

Тěрěслӳре çакă курăнчě: „Пионер“ колхозăн кăçал кěрхи тырăсене 190 гектар акса хăвармалла. Ку тарана çитсе 87 гектар çěртме тунă. Ыттисене клевер тата вика çулса илнě вырăнсене акмалла. Анчах клевер, вика çулса пухас ěç кая юлса пырать-ха. Комисси, çакна палăртса, клеверпа вика çулса пухас ěçе вăйлатма, июлěн 15-мěшě тěлне кěрхи тырăсем акмалли пěтěм çěр лаптăкне сухаласа çӳрелесе пěтерме хушрě.

Колхозра паянхи куна 132 гектар çум çумланă. Çапах та çумлă вырăнсем уйра пур-ха. Ялхуçалăх машинисене юсас ěç те юлса пыни курăнчě. Икě жнейкăран пěри çеç юсавлă, 32 урапаран 16-шě ěçе юрăхсăр, 200 çурларан пěрне те шăлламан, кěреплеллě çавасем ěçе хатěр мар.

Комисси çак çитменлěхсене халех пěтерме, силос хывас, çум çумлас ěçсене июлěн 10-мěшěччен пурнăça кěртме хушрě, колхоз тырпулсене пухса кěртме мěнле хатěрленнине июлěн 10-мěшě хыççăн çěнěрен тěплěн тěрěслесе тухма кирли çинчен асăрхаттарса хăварчě.

Х. ЛИСИН.

Жнейкăсене хăйсен вăйěпе юсанă

СĚНТĚРВĂРРИ, июлěн 5-мěшě. (Телефонпа). ВКП(б) Чăваш Обкомěн XV-мěш пленум решенийě тăрăх июлěн 1-мěшěнчен пуçласа колхозсем тырпулсене пухса кěртме хатěрленнине пăхса тухмалла. Çак ěç пирěн районра июлěн 3-мěшěнче пуçланчě, Тěрěслӳ комиссийěсен колхозсем уборкăна мěнле хатěрленнине кăна мар пăхса тухмалла, ěçре палăрнă çитменлěхсене хăвăрт тӳрлетмелли мерăсем те йышăнмалла. Малта пыракан колхозсен ěç опытне йышăнса, пур колхозсене те тырă вырма тěплěн хатěрлесе çитермелле.

Амачкинăри „Красная Звезда“ колхозра тěрěслӳ ěнер пулса иртрě. Колхоз тырпулсене пухса кěме тěплěн хатěрленни курăнчě. Жнейкăсене колхоз хăй вăйěпех юсанă. Машинăн хăшпěр пайěсене колхоз тимěрçи хăех тунă, жнейкăсене пурне те çирěп юсанă. Çавăн пекех урапасем те çирěп, ěçе хатěр. Колхоз правленийě тырпулсене пухса кěртес ěçěн планне тěплěн шухăшласа тунă. Кашни колхозника ěçе тěрěс вырнаçтарса тухнă.

Халě колхозра итемсене, кěлет-амбарсене тасатса дезинфекцилеççě, михěсем çěлеççě.

П. ТИТОВ.

Тырпул фронтěнче пирěн пек кěрешěр

Пирěн чаçра чăвашсем 45 процент шутланса тăраççě.

Чи малтан эпир Сталинграда хӳтěленě çěрте çапăçрăмăр. Çав çапăçусенче чăвашсем хăйсем паттăррăн çапăçнине кăтартрěç. Вěсен паттăрлăхěнчен командирсем те тěлěнетчěç. Каярахпа нумайěшне орденсемпе наградăларěç. Сталинграда нимěçсенчен тасатса çитерсен, хула площадěнче митинг пулчě. Унта Хрущев юлташ пире Сталин юлташ иккěмěш хут тав туни çинчен тата пирěн чаçа канма ярасси çинчен пěлтерчě. Анчах эпир канма килěшмерěмěр, урăх фронта яма ыйтрăмăр. Пирěн ыйту пурнăçланчě. Пире пěр хула çывăхěнчи гвардейски чаçпа пěрлештерчěç. Нимěçсем кунта 8 эрне хушши пěр вырăнта тăнă пулнă. Çав часть эпир çитсен пěр кун хушшинчех халăх пурăнакан 21 пункта нимěçсенчен тасатрě. Çав çапăçусенче те чăвашсем хăйсен паттăрлăхне кăтартрěç.

Гвардеецсем мěнле çапăçни çинчен ăнланатăр пулě. Вěсем кирек мěнле хěçпăшалпа та çапăçма пултараççě. Çавăнпа ěнтě нимěçсем гвардеецсенчен темскертен хăранă пек хăраççě.

Анчах эпир паттăррăн кěрешни тылри çынсен пирěн паттăрлăхпа ăнланса пурăнмаллине пěлтермест. Ку—тырпул фронтěнче пысăк тухăçлă тырпул туса илессишěн гвардеецсем пек кěрешме кирлине, фронта кирлě чухлě апат-çимěç парса тăмаллине пěлтерет. Тырпул туса илес ěçре кайра пыракан колхозсем пулмалла мар, вěсен пирěн пек кěрешмелле.

Пěр чаçри гвардеецсем:
П. Казаков, Матунин,
К. Захаров, П. Богданов,
Николаев, Наумов, Петров.

Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă ÇЫРУ

(ЮЛАШКИ)

Паттăр ывăламарсем! Сирĕншĕн пирĕн халăх ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать. Эпир сире валли апат-çимĕçсем, ăшă тумтирсем, кĕпе-йĕмсем тăрăшса пухатпăр, фронта пиншер парнесем ярса тăратпăр.

Республикăри ĕççыннисем тăван Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума 82 миллион тенкĕ укçа пухса пачĕç. Хĕрлĕ Çар фондне пирĕн колхозниксем харпăрхăй запасĕнчен 120 пин пăт ытла тĕштырă хыврĕç. Çакăншăн пире Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар ячĕпе икĕ хутчен тав туса саламларĕ.

Пирĕн паттăр воинсем! Фашистла ирсĕрсене ывăнма пĕлмесĕр пĕтерсе пырăр! Хăвăрăн тылри арăмăрсемшĕн, ачăрсемшĕн, аçăрсемпе аннĕрсемшĕн ан пăшăрханăр. Вĕсемшĕн пĕтĕм халăх мĕнпур кăмăлтан тимлĕн тăрăшнине пĕлсе тăрăр. Халăх фронтовиксен çемьисене пулăшасси кунран кун вăйланса пырать.

Тылра эпир ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр. Анчах вăрçă пире кашнинех татах та ытларах вăй хурса, татах та тимлĕнрех ĕçлеме хушнине эпир пĕлетпĕр. Пирĕн умра ĕçсем татах та нумай-ха.

Пирĕн хаклă фронтовиксем! Тăван çĕршыв умĕнче, сирĕн умăрта, пире хӳтĕлекен паттăрсем, эпир çапла тупа тăватпăр: Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăça кĕртĕпĕр, фронтшăн икĕ хут, виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлĕпĕр. Сирĕнпе пĕрле пĕтĕм чĕререн тупа тăватпăр: ылханлă тăшмана пĕтерсе тăкăпăр, тăван çĕре нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатăпăр!

Тăшман вăйлă-ха. Вăл хăй пур-пĕрех пĕтессине туйса, тискерленнĕçемĕн тискерленсе пырать. „Выçă кашкăр та фашистран йăвашрах", тет пирĕн халăх.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ, ăçта тĕл пулнă, унта вĕлер фашиста! Пусаран вăрлăх ан кĕт, фашистран ырлăх ан кĕт. Вĕлер фашиста!

Ăçта нимĕç чунилли—унта çын вилли. Вĕлер нимĕçе! Нимĕççене мĕнчул ытларах вĕлерен, эпир тăшман çĕнтерес кун çавăн чухлĕ хăвăртрах çитĕ!

Чăваш ывăлĕ! Тăвансемпе туссемшĕн санăн чĕрӳ ялланах тăванла çемçе те кăмăллă пулнă. Украина, Белорусси, Литва, Латви, Эстони çĕрĕсен, Смоленск, Ленинград облаçĕсен нимĕççем йышăннă районĕсенче пирĕн тăвансем фашист атти айĕнче йынăшнă сасса эсĕ илтетĕн. Пирĕн тăван совет çыннисем фашистсен пусмăрĕнче асапланнă чухне санăн чĕрӳ лăпкă пулма пултараймасть! Украинăра, Остер хули патĕнче, чăваш халăхĕн аслă поэчĕн Çеçпĕл Мишшин тăпри выртать. Вăл Украиннăна хамăрăн тăван чăваш çĕршывне юратнă пекех юратнă. Фашистсем пирĕн поэтăн таса тăприне хăйсен юнлă аттисемпе таптаса вараларĕç.

Чăваш халăхĕн ывăлĕ, васка! Пирĕн тăван çĕршыври ытти халăхсен мухтавлă ывăлĕсемпе—Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе пĕрле пулса, хамăрăн çĕре тăшманран хăвăртрах тасат! Çапăçу хирĕнче Улăп-паттăр пул! Санпа юнашар алла-аллăн тăрса вырăс, украинец, белорус, грузин, тутар тата пирĕн тăван çĕршыври ытти халăхсен воинĕсем çапăçăва кĕреççĕ. Сан чĕрере пирĕн паттăр землякăн Василий Иванович Чапаевăн хăвачĕ сӳнме пĕлмесĕр çунса тăрать. Сăнăн юнăнта—аслă Атăл хăвачĕ.

Герой пул, чăваш халăхĕн ывăлĕ! Тăшмана çапса аркат! Киле çĕнтерӳпе таврăн, кунта сана пĕтĕм халăх чун-чĕререн юратса кĕтсе тăрать!

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар!

Пирĕн çĕршыври халăхсен таса туслăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çар боецĕн чаплă ятне чыслăн тытакан чăваш халăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, пирĕн полководец, Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин!

Алă пуснă: П. Т. **Лупанов**—пĕр заводри стахановец-орденоносец; А. Д. **Васянин**—Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ; А. М. **Сарсков**—Улатăр районĕнчи „Красный Луч" колхоз колхозникĕ; Л. П. **Уткина**—Елчĕк МТС-нчи трактористка; Л. Г. **Николаев**—Канаш деповĕнчи машинист-орденоносец; П. М. **Макарова**—Совет Союз Геройĕн, гварди майорĕн Ефимовăн амăшĕ; И. М. **Чарыков**—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ; Н. И. **Шелеби**—Чăваш АССР халăх поэчĕ-орденоносец; Т. А. **Моисеева**—Улатăрти паровозсем юсакан заводăн цех начальникĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ-орденоносец; А. М. **Матвеев**—Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ; **Егоров**—Вăрнар леспромхозĕнчи вăрман касакан стахановец; **Вазикова**—Сĕнтĕр районĕнчи „Çĕнĕ Юнкă" колхозри свинарка; М. В. **Дубровин**—Пăрачкав районĕнчи „Красный Пахарь" колхоз председателĕ; Е. В. **Дмитренко**—пĕр заводри стахановец; Н. И. **Белков**—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ; А. В. **Черпакова**—РСФСР тава тивĕçлĕ учительници; З. А. **Андреева**—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ; З. Н. **Кузьмина**—Етĕрне районĕнчи „Сура" колхоз фермин заведующийĕ; С. К. **Коротков**—ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ-орденоносец; А. Г. **Гаязов**—Елчĕк районĕнчи „Марс" колхоз председателĕ; М. Д. **Михайлов**—СССР халăх артисчĕ, Сталинла премин лауреачĕ; Т. Ф. **Драгункина**—Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн доярки; А. С. **Чемолосов**—профессор, медицина наукисен докторĕ-орденоносец; А. А. **Алексеева**—Элĕк районĕнчи „Красный Октябрь" колхозăн свинарки; П. **Михайлов**—ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ; Б. А. **Алексеев**—Чăваш АССР халăх артисчĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ; Л. Н. **Бабаева**—Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз фермин заведующийĕ; М. А. **Андреев**—ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ; А. Х. **Вахитова**—Чкаловски районри „Красный Октябрь" колхоз фермин заведующийĕ; Г. А. **Херсонов**—Ишлей райсовет исполкомĕн председателĕ, Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ; Е. П. **Анкудинов**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Красная Армия" колхоз председателĕ; **Аркадий Эсхель**—поэт; П. Е. **Егорова**—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн сурăхĕсене пăхаканĕ; И. С. **Бенский**—завод директорĕ; Н. Г. **Малов**—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ; Д. Я. **Митьков**—ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ, Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ; М. С. **Спиридонов**—художник, РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ; А. Т. **Афонин**—пĕр заводри стахановец; Н. Е. **Куликова**—Улатăр райсовет исполком председателĕн заместителĕ-орденоносец; М. Н. **Никифорова**—Красноармейски районри Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн доярки; М. П. **Макаров**—Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ; А. Ф. **Демянков**—Канашри вагонсем юсакан заводри хĕрлĕ ялавлă бригадăн бригадирĕ; А. И. **Яковлев**—профессор, истори наукисен докторĕ, Сталинла премин лауреачĕ; С. Е. **Белоглазов**—Кувакино районĕнчи „12 лет Октября" колхозăн конюхĕ; В. **Чураков**—Йĕпреç леспромхозĕнчи вăрман касакан стахановец; А. Ф. **Фадеева**—Ишлей районĕнчи „Родина" колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен бригадăн бригадирĕ; И. П. **Канатов**—завод директорĕ-орденоносец; А. Я. **Чечнев**—Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхоз председателĕ; А. С. **Горбунова**—Тăвай районĕнчи „25 лет Октября" колхозăн доярки; С. С. **Карзанова**—Октябрьски районри „Красный труженик" колхозри чăх-чĕпсене пăхаканĕ; С. И. **Чернов**—Вăрмар МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ; П. М. **Маркиянов**—Йĕпреç МТС-ĕн комбайнерĕ; В. П. **Воробьев**—композитор; О. М. **Волков**—Первомайски районри „Восход" колхоз председателĕ т. ыт. те. Пĕтĕмпе Чăваш АССР-ĕнчи 378.634 ĕççынни алă пуснă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 5-мĕшĕнче иртен пуçласа пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшман пехотипе танкĕсен наступлени пуçласа янă пысăк вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă, çав вăйсене йышлă авиаци пулăшса пынă. Тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, пысăк çухатусем тӳстернĕ. Уйрăм вырăнсенче çеç нимĕçсен пысăк мар отрячĕсем пирĕн оборонăна савăлланса кĕме пултарнă.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 586 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе тăшманăн 203 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çапăçусем малалла пыраççĕ.

* * *

Орелпа Курск енче пĕр соединенин боецĕсем тăшманăн хаяр атакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсен пысăк мар отрячĕ пирĕн оборонăн малти пайĕнчен çур километр шала кĕме пултарнă. Артиллери пĕр çĕре персе тăнипе тата стрелковăй чаçсем хирĕç пыра-пыра çапнипе, тăшмана малалла кайма паман. Ытти участоксенче нимĕçсем хăйсен пехотине пулăшма танксемпе авиацин йышлă вăйĕсене янă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Гитлеровецсен хаяр атакисене сирсе янă. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн малти чаçсем наступлени пуçласа янă тăшмана артиллерипе миометсенчен тата пăшалсемпе пулеметсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Совет оборонин малти линийĕ умĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн боецсем хăйсен позицийĕсене вăйлăн хӳтĕлесе тăраççĕ, нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пĕр соединенин боецĕсем ирхинехи çапăçусенче нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 120 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн пĕр чаçăн летчикĕсем тăшман авиацин атакисене сирсе янă чухне сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 62 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче разведка тăвакан ушкăнсем активлăн кĕрешнĕ. Фепитов лейтенант ертсе пыракан разведчиксем тăшман позицийĕ патне çывăхарнă та тăшман траншейисене гранатăсем вăркăнтарнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан ушкăн минăсем хурса тухнă темиçе участок урлă каçнă та, штык вĕççĕн çапăçса, нимĕçсен боевой хуралне вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшман оборонин системи çинчен паха сведенисем тупсан, разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Калинин фронтĕнчи пĕр участокра старши лейтенант Белоусов ертсе пыракан подразделени халăх пурăнакан пунктра çирĕпленсе ларнă нимĕççене вирлĕн атакăланă. Кĕтмен çĕртен пырса тапăннине пула тăшман салтакĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсемпе çар пурлăхне пăрахса хăварса, пĕр йĕркесĕр тарнă. Совет боецĕсем 60 гитлеровеца вĕлернĕ. Çав пункта тытса илнĕ. Нимĕç салтакĕсен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 6 пулемет, 20.000 патрон, 300 граната, 2 радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем пур. Пирĕн боецсем çĕнĕ позицисенче çирĕпленсе ларнă, тăшманăн 3 контратакине ăнăçлăн сирсе янă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăç-несерехре артиллерипе миометсенчен перкелесе тăнă. Пирĕн подразделенисем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă, 2 блиндажа çĕмĕрнĕ. Жасеев капитан ертсе пынипе разведка тăвакан ушкăн нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне атакăланă. Пуçланса кайнă çапăçура разведчиксем темиçе вунă гитлеровеца вĕлернĕ, темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Карели фронтĕнче пĕр подразделенири разведчиксен ушкăнĕ тăшман тылне кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем ирхине ирех тăшманăн иртсе пыракан колоннине засадăран пенĕ, нимĕçсен 30 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ темиçе кун каялла тăшманăн фронталла пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Нумай авиамотор, 200 ещĕк авиаци кĕленчи пĕтерсе тăкнă, 5 автомашина, паровоз, 30 вагон, 8 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Крушени вăхăтĕнче темиçе вунă нимĕç салтакĕ вилнĕ.

* * *

Тăшманăн вилнĕ е тыткăна лекнĕ салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусем Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕсем мĕнлине кăтартса пыраççĕ. Бруно Щетлин салтак патне янă çырура çапла каланă: „Пирĕн пурин те пĕр кăмăл—çак хăрушă вăрçă часрах пĕттĕрччĕ, тетпĕр эпир. Нервăсем чăтса тăраймаççĕ". Пĕр Генрих Вольфен ятлă çын Новак салтака çапла çырать: „Сана çĕнĕ хыпар пĕлтеретĕп: 6-мĕшпе 7-мĕш класенче вĕренекен ачасене тунтикун çара илчĕç. Çавăн пек çамрăксене те çара илессĕ пулсан, пирĕн ĕçсем начар вара".

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем оккупацилленĕ совет районĕсенчи мирлĕ çынсене çаплах тискеррĕн тыткалаççĕ. Витебск облаçĕнчи Белый ялĕ хыçĕнчи вăрманта гитлеровецсем стариксемпе хĕрарăмсене тата ачасене 86 çынна персе вĕлернĕ. Старина ялĕнче нимĕçсем 24 колхознике чĕрĕллех çунтарса янă. Фашистла ирсĕрсем çав ялтах темиçе хĕре пусмăрласа мăшкăлланă, унтан вĕсене персе вĕлернĕ.

Июлĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшманпа вăйлăн çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Орелпа Курск енче пирен войскăсем тăшман пехотипе танкĕсен хаяр атакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсен 100 танкĕ пирĕн оборонăн малти линине татса кĕнĕ. Пирĕн чаçсем тăшманăн çав танксем хыççăн пынă пехотине татса илсе, ăна пирĕн оборонăн малти линийĕнчен иртме паман. Пирĕн оборонăра совет артиллерисчĕсем тăшман танкĕсене вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, тăшманăн 38 машинине персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен ытти танкĕсем каялла чакнă. Çав участокра пирĕн артиллери хăй кăна тăшманăн 50 танкне çити пĕтерсе тăкнă, çав шутра „Т-6" („Тигр") йышши 10 йывăр танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Сигин, Соболев тата Звеньков юлташсем ертсе пыракан подразделенисем тăшманăн 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 4000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Çапăçусем малалла пыраççĕ.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пыракан тăшманпа вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсем пĕр ансăр участока танксемпе пехотăн йышлă вăйĕсене пухса тăратнă та пирĕн чаçсене хирĕç янă. Совет боецĕсем тăшманăн пур атакисене те сирсе янă. Пĕр соединенин участокĕнче кăна нимĕçсен 2000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, тăшманăн 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра нимĕçсем, пирĕн подразделенисене хĕссе пырса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн боецсем, хирĕç пырса çапса, тăшмана çав пунктсенчен хăваласа кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă.

* * *

Мценскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри пĕр участокра нимĕçсен икĕ полк таран пехоти пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Пĕр паха высота районĕнче тăшман малтан темиçе траншейăна тытса илнĕ. Пирĕн чаçсем, хирĕç пырса çапса, гитлеровецсене каç пуласпа унтан хăваласа янă, хăйсен позицийĕсене пурне те каялла йышăнса илнĕ. Çапăçура нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен перкелесе тăнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, артиллери батарейине тата 10 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă. Тăшман пехотин вак ушкăнĕсем пирĕн оборонăн малти линине разведка туса пĕлме хăтланнă. Пирĕн подразделенисем нимĕç разведчикĕсене вăхăтра асăрханă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, вĕсене сапаласа янă.

* * *

Карели фронтĕнче Макаров юлташ командир пулса тăракан чаçри подразделенисем тăшманăн тĕреклетнĕ икĕ пунктне атакăланă, çав баасемпе тăшман диверçиллĕ ĕçсем тăвас тĕлĕшпе усă курнă. Пирĕн боецсем белофинсене кĕтмен çĕртен атакăланă. Тĕреклетнĕ пĕр пунктри гарнизон тарса саланнă. Тепĕр пунктри гарнизон хирĕç тăма хăтланнă, анчах ăна аркатса тăкнă. Тăшманăн 260 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ е аманнă. Пирĕннисем 9 дзот, 30 землянка, 8 çурт (нимĕçсем укреплени тунăскерсене) тата 7 склад ишĕлтернĕ. 3 миномет, 3 радиостанци тата винтовкăсемпе автоматсем тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен подразделенийĕпе çапăçма пуçланă. Партизансем гитлеровецсене çавăрса илнĕ те вĕсене юханшыв çумне хĕстерсе лартнă. Шыв урлă ишсе каçма хăтланнă нимĕççене пăшалсемпе, пулеметсемпе пенĕ. Çыран хĕрринче темиçе вунă гитлеровец вилсе е аманса выртса юлнă. Кунсăр пуçне, нумай çын шыва путса вилнĕ. Партизансем 3 миномет, автоматсем, винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсем Барановичи хулинче кăларакан хаçат июнĕн 30-мĕшĕнче пĕр статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра çакăн çинчен пĕлтернĕ: нимĕç влаçĕсем июнĕн 22-мĕшĕнче Минскри хула театрĕнче вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул тултарнă кун ячĕпе пуху тунă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен çав пухăвĕ пынă вăхăтра театрта взрыв пулнă. Статьяра 100 гитлеровец ытла вилни, аманни çинчен каланă. Анчах та çав статьяна питĕ çиллессе çырни Минскри хула театрĕнче пулнă взрыв вăхăтĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен çухату ытларах пулнине кăтартать.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германин Кельн тата Гамбург хулисене хаяррăн тапăннă. Кельн çине 45 минута хушши бомбăсем пăрахнă. Пушарсем нумай тухнине тата взрывсем нумай пулнине палăртнă.

Ĕнер кăнтăрла американецсен „Вăçекен крепость" йышши бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем нимĕçсен Ле Манри авиаци заводне, Нантри ремонтнăй мастерскойĕсене тата Ла Паллисри (Франция) подводнăй лодкăсен базине тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче союзниксен авиацийĕ çаплах итальянецсен Сицилипе Сардини утравĕсем çинчи чылай çар об"екчĕсене хаяррăн тапăннă. Ĕнер кăна сывлăшри çапăçусенче Сицили çинче тăшманăн çăлтан та 43 самолетне пĕтернĕ.

Июлĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн Римран инçех мар вырăнаçса ларнă çыранри об"екчĕсене атакăланă.

АНГЛИ ПАТРУЛĔСЕМ КРИТ УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин типçĕр çинчи пысăк мар вăйĕсем Крит утравĕ çине патрульсен десантне антарнă. Патрульсем аэродромсем патне çитнĕ. Вĕсен ĕçĕсем ăнăçлăн пулса иртнĕ. Тăшманăн çĕр çинче ларнă темиçе самолетне пĕтерсе тăкнă. Англи патрулĕсем пурте каялла таврăннă.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Вангунгу утравĕ çине (Çĕнĕ Георгий çывăхĕнче) пырса аннă. Çапăçура 300 японеца вĕлернĕ. Япони гарнизонĕн юлашкийĕсене сапаласа янă. Союзниксен çухатăвĕсем пысăках мар. Виру гаванĕ районĕнче (Çĕнĕ Георгий) союзниксен патрулĕсем тăшманăн пĕр-пĕринчен татăлса кайнă ушкăнĕсене çавăра-çавăра илнĕ. Союзниксен авиацийĕн пысăк соединенийĕсем японецсен Мундари позицийĕсене тата Байроко гаванĕнчи (Мундаран çурçĕреллерехре) малти постсене атакăланă. Саламауара çаплах патрульсем тытăçса пынă. Нассау районĕнче лăпланнă.

ИСПАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Испанирен тухса кайнă испанецсен Мексикора эрнере пĕрре тухса тăракан „Эспания Популяр" хаçачĕ çапла пĕлтерет: Испанире пулнă çынсем нумай хуласенче нимĕçсем пуçпулса тăнине тата Франкона хирĕç демонстрацисем пулса иртни çинчен калаççĕ. Çав демонстрацисем „Испанишĕн, Германие хирĕç! Сывă пултăр Росси" тенĕ лозунгсемпе пулса иртнĕ. Хресченсем фалангистсем туртса илнĕ тырра çунтара-çунтара яраççĕ.

Испанире хуçа пулса тăрса, нимĕçсем Ла Коруньяра икĕ радиопередатчик лартнă, çав радиопередатчиксем подводнăй лодкăсене союзниксен суднисем ăçталла кайни çинчен пĕлтерсе тăраççĕ.

СИКОРСКИЙ ГЕНЕРАЛ ВИЛНИ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, „Либерейтор" йышши самолета авари пулнипе, ĕнер çав самолетпа вĕçсе пынă Сикорский генерал пĕтнĕ. Самолет Гибралтартан вĕçсе тухнă хыççăн часах çĕмĕрĕлсе кайнă. Сикорскипе пĕрле пулнă генерал-майор Климецкий тата Польшăн генеральнăй штабĕн ытти членĕсем те пĕтнĕ. Самолет летчикĕ кăна вилмен. Анчах вăл та йывăр аманнă, госпитальте выртать.

КĔСКЕН

● Хальхи вăхăтра Америка çарĕнче 6 миллион та 800 пин çын шутланать. Пĕлтĕр 2 миллион та 500 пин çын кăна пулнă.

● Франције оккупациленĕрепе гитлеровецсем заложник шучĕпе тытса хупнă 50 пин француза персе пăрахнă. 400 пин француза тĕрмене е концентрациллĕ лагере хупнă, 2 миллион çын выçăпа е чирпе вилнĕ. Бельгие оккупациленĕрепе нимĕçсем бельгиецсен 7.500 патриотне персе пăрахнă.

● Февральпе март уйăхĕнче нимĕçсем Францирен Германие 10 пин тонна пăхăр тата йăспа тăхлан, 93 пин тонна аллюминий, аллюминипе магни руди тата ытти металсем, тĕрлĕрен чĕртавар, вăрман материалĕсем, вăрлăх, тырăсем, фруктсемпе пахча çимĕçсем нумай турттарса кайнă.

Пирĕн авиаци Гомель, Унеча, Рославль чугунçул узелĕсене тапăнни

Июлĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Гомель, Унеча тата Руславль чугунçул узелĕсене тапăннă. Гомель чугунçул узелĕнче тăшманăн войскăсемпе боеприпассем тиенĕ эшелонĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Çавăн пекех тата бомбăсем складсем çине тӳрремĕнех пырса ӳкнине палăртнă. Бомбăсем пăраххине пула 13 тĕлте пушар тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Унеча чугунçул узелĕнче совет летчикĕсем тăшман эшелонĕсемпе склачĕсем çине бомбăсем питĕ нумай пăрахнă. Тапăнсан темиçе минутăранах складсемпе эшелонсене вут ярса илнĕ.

Рославль чугунçул узелĕнче сортировочнăй тата йышăнса ăсатса тăракан парксем енне фугаслă бомбăсемпе вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Çав парксенче вагонсем нумай пулнă. Бомбăсем пăраххине пула пушарсем тухнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

Ĕç çирĕп план тăрăх пулса пырать

ВАРНАР, июлен 2-мĕшĕ. (Хамăр корр). Булатовăри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал тырпулсене пухса кĕртме ĕнтĕ чылайранпа хатĕрленеççĕ. Ĕç кунта çирĕп план тăрăх пулса пырать. Бригадăсем хăйсем ĕçлемелли машинăсемпе транспорт инвентарьне малтан тĕплĕн пăхса тухнă пулнă. Паянхи куна кунта бригадăсем пĕрер жнейка, икĕ лобогрейка юсаса хатĕрленĕ. Халĕ лобогрейкăсемпе утă çулаççĕ. Кĕреплеллĕ çавасем 20 ытла тунă. Çурла-çавасене çирелĕклĕ хатĕрленĕ, шăллаттарнă. Лаша кӳлмелли таврашсем, шăналăк-михĕсем çирĕп. Тырă вырнă çĕрте кам мĕнле ĕçре пуласси халех паллă. Машиноведсене, тырă турттаракансене уйăрса çирĕплетнĕ. Ĕç планĕ тунă.

Х. Лисин.

ÇУЛĂЙĔР ĔÇНЕ МАЛТАН ВĔÇЛЕРĔ

КУСЛАВККА. „3-мĕш Интернационал" колхоз июнĕн 29-мĕшĕ тĕлне çулăйĕр ĕçĕн заданине 105 процент пурнăçларĕ. Çулăйĕр ĕçĕнче Ф. Якимов, В. Саваскин колхозниксем кăтартуллăн ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен заданине кашни кунах 150—170 процент тултарса пычĕç.

(„Ленин ялавĕпе" хаçатран).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци Управленийĕ Шупашкарти сассăр кино механикĕсен курсне тата Хусанти саслă кино механикĕсен курсне вĕренме илет.
Шупашкарти курсра 26 кун вĕренмелле. Вĕрентме июль уйăхĕн 10-мĕш числинче тытăнаççĕ.
Хусанти курсра 4 уйăх вĕренмелле. Вĕрентме августăн 25-мĕш числинче пуçлаççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Дом Советов, Управление Кинофикации, Отдел кадров. Телефон—Советсен çуртĕ, добавочнăй № 1—00. Кунсăр пуçне тата Кинофикаци Управленийĕн Межрайоннăй отделĕсенче ыйтса пĕлме пулать.

Чăвашпромсоюза яланах ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: главнăй бухгалтер, ĕç экономисчĕ, машинистка-секретарь.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 739. Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л.